939
32-292

Ил. ТУКТАШ

# ОКТĂПĔР ÇИЛĔ

СĂВĂСЕМПЕ
ПОЕМĂСЕМ

Колхос уй-хирĕсемпе хапрăк-савăтсенҫен литтераттурăна хутшăннă присывниксене — вĕресе тăракан иксĕлми вăйлă утарнĕксене.



ВĂТАМ-АТĂЛ КРАЙĔНҪИ
ПРОЛЕТТАРИ ПИССАТТĔЛĔСЕН АССОТСИАТСИЙĔ
ҪĂВАШ ÇЕКСИ

ИЛЛЕ ТУКТАШ

# ОКТĂПĔР ÇИЛĔ

## СĂВĂСЕМПЕ ПОЕМĂСЕМ

Умсăмахĕ **Ф. Т. ЛОШНИККĂВĂН**

ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИСЕН ПĔРЛЕШĔВĔ

1932

ВĂТАМ-АТĂЛ КРАЙĔНҪИ
ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
**Самар — Мускав**

Редактор **И. Викторов.**
Техредактор **Нестэр Янгас.**
Сдано в производство I/IV-32 г.
Подписано к печати 20/IV-32 г.

Крайлит Г-717. СВ ОГИЗ № 619. Индекс VI-X-н-4 6.
Тираж 2000. Форм. 62×94. 3 п. л. Кол. зн. в п. л.
56.000. Типография им. т. Мяги Средневолжского
Краевого Государственного Издательства.

# Умсăмах.

Илле Тукташ—çамрăк поет. Илле Тукташ—пролеттариллĕ поет. Тукташ—революци поеҫĕ. Çамрăкла революци кăкăрĕ çинҫе ӳснĕскер вăл пĕтĕмпех революци çынни. Революциллĕ вăхăтра ӳссе вăл революци çинҫен йурлаҫ. Революци Тукташ куçĕ умĕнҫе ӳссе пыраҫ, революци тĕрекленнĕ май Тукташ поет та ҫăмăртанса тĕрекленет. Тукташ кивĕ йала курман, çавăнпа та вăл çĕнĕ пурнăç çинҫен кăна çыраҫ.

Тукташ—уй-хир аҫи. Вăл йал ҫухăнлăхрӑ, тĕттĕмлĕхре пурăннине курнă. Вăл курнă ҫухăн ҫăвашсем çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешнине, Совет влаçĕ кайа йулнă, пусмăрта пурăннă вак халăхсене пулăшнине. Вак халăхсем Октăпĕр хумĕпе кăна ирĕке тухрĕç. Октăпĕр çилĕ вак халăхсене автонимисем паҫĕ, нумайăшне тăван çыруллăх паҫĕ, шкулсем, пуҫнитсăсем уçрĕ, хаçат-шурналсем, аслă шкулсем туса паҫĕ, вак халăхсене совет оркăнĕсене кӳртрĕ. Вак халăхсен рапоҫҫийĕсем, ҫухăнĕсем, вăтамĕсем, колхоçнĕкĕсем, хĕрарăмĕсем вырăнти советсенҫе те, тĕп правиттĕлствăра та сахал мар ĕçлеççĕ. Совет влаçĕ вак халăхсене хăйсен хуçалăхне çĕклеме май паҫĕ. Вак халăхсен йалĕ Тукташ куçĕ умĕнҫех çĕнелсе пыраҫ. Сухапуçĕн ĕмĕрĕ иртет, ана çинҫи муклашкасене пуртăпа ватасси пăҫланса пыраҫ. Ӳсеççĕ колхоссем, совхоссем. Ҫăваш йалĕнҫе нихăçан пулман йапаласем курă-

каççĕ: трактăр, кино, ратио. Улшăнат̆ йал, ӳсет нуљттурӑ. Улшăнат̆ çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнса пурнасси: пĕтет експлоаттатси, ишĕлет капитталисăм никĕсĕ, унăн йулашки шанђăкĕ—кулаксен класне те халĕ сотсиалисăм паттăрăн çĕнтерсе пырат̆. Вак халăхсен йалĕ те вырăс пролеттариађĕ пулăшнипе сотсиалисăмăн шанђăклă çулĕ çине куçрĕ. Ленин парттийĕ—комуниссен парттийĕ—ĕçхалăхне тĕрĕс çулпа йертсе пырат̆. Тĕрлĕ натсиллĕ ĕçхалăхĕсем хушшинђе тăванлăх ӳсет. Вĕсем хушшинђе инттернатсионалисăм тĕрекленнĕ май капитталисăм никĕсĕ шатăртатат̆.

Тукташ пĕтĕм ђунĕпех револютси ăшĕнђе. Вăл кунтан-кун, çулран-çул револютси ӳснине курат̆, сотсиалисăм тунӑ çĕрте ĕçлет. Тукташа револютси çуратнӑ. Тукташ револютсирен пуçне мĕн синђен йурламалла? Револютси Тукташăн ашшĕ-амăшĕ. Унăн творђђĕстви револютсирен сĕткен илет. Тукташ—пусмăр айĕнђе пулнӑ халăх поеђĕ. Ђăваш халăхĕпе пĕрлех Тукташ пусмăртан тухнӑ, хăтăлнӑ. Тукташăн йуррисем—çамрăк йурри, капитталисăм сăнђăрне татса ирĕке тухса сотсиалисăм тăвакан халăхсен йурри. Унăн сăввисем клас вăйне кăтартаççĕ. Тукташ йуррисем авалхи ђăвашăн хурлăхлӑ йурри мар. Çук, унăн кĕввисем ĕмĕт, шанђăк кӳртеççĕ.

Сотсиалисăм сасартăк пулса лармаст̆. Ăна тунӑ ђух нумай йăвăрлăхсем, тĕлĕпе çитменлĕхсем пулаççĕ. Вилекен капитталисăм хăйĕн поçитсине кĕрешӳсĕр памаст̆. Унăн хура çăхан пек контрреволютсиллĕ вăйĕ: кулак, пуп, йумăçӑ, çпеккулянт, хулари непмăн, тĕн, тĕттĕмлĕх. Контрреволютсине вретиттĕлсем пулăшаççĕ. Епĕр, çĕнĕ пурнăç тăва-

кансем, йăвăрлăхран хăрамалла-и? Епĕр революттсионерсем тăшман акĕнҫĕ умĕнҫе ҫĕркуҫланса лармалла-и? Ҫук! Пирĕнте вăй, пирĕнте етем тĕрĕслĕхĕ! Пирĕн ҫула ленинисăм ҫутатса тăрать. Епĕр йăвăрлăхсенҫен хăрамастпăр, мĕншĕн тесен вĕсем вăхăтлăха кăна. Йăвăрлăхсем хыҫҫăн илемлĕ пурнăҫ ҫитессе пĕлетпĕр епĕр. Вăл пурнăҫа епĕр хамăр алăпа тăватпăр, ун патне ҫитрĕмĕр те ĕнтĕ.

Тукташ ҫăваш хушшинҫе паллă, ăна пайтах ҫăваш вуланă. Ҫăваш респуплĕкĕ Тукташа лайăх пĕлет, анҫах пирĕн Вăтам-Атăл крайĕнҫе ăна пĕлекенсем сахал-ха. Пирĕн крайри ҫăвашсен унăн сăввисене вуламалла, унăн творҫҫĕствине пĕлмелле.

Тукташ сăввисене вуласан поет тĕплĕн ĕҫлени курăнать. Мĕн ҫинҫен ҫырсан та вăл хăй ĕмĕтне ҫырать. Ҫийелтен кăна вĕҫсе иртмест вăл, йапаланă тĕпрен, тымартан илет. Лайăх, тĕплĕн, шухăшламасăр ҫырмасть Тукташ. Вăл класлă поет, партти ҫулйĕрĕнҫен унта-кунта пăркаланмасть. Унăн ҫулĕ —пролеттари, партти, рапоҫҫи клас, пĕтĕм ĕҫхалăх ҫулĕ.

Ипер-ха ҫак кĕнекене. Ахалех йаг хуман поет хăй кĕнекине «О к т ь а п ĕ р ҫ и л ĕ» тесе. Октьапĕр ҫил-тăвăлĕ поета савăнтарать. Револютси хумĕ хăрушă пулсан та поета хăратмасть, мĕншĕн тесен вăл хум тĕнҫери пусмăрлăха шăлса ывăтать.

Кĕрле,
Хăрушă ҫил,
Кĕрле!—

тет поет. Вăл револютси ҫил-тăвăлĕ умĕнҫе мешҫенле ҫаршавлă кантăк хыҫĕнҫе пытанса ларасшăн мар. Вăл кĕрешӳ патне ҫĕнет:

Хӗп-хур ҫури,
Хускал,
Вӑран!

Тукташ йӑвӑрлӑхсем пирки йӑнӑшса, йермешсе лармасӗ. Сотсиалисӑм пулассине поет шанаӗ, вӑл хӑй тӑваӗ ӑна.

Пурӑнӑҫ ҫӗнелӗ,
Пурӑнӑҫ вутланӗ.
Епӗр хаҫ
Парӑнми ҫул-ҫӗрелле.
Кивӗ йал ҫухалӗ,
Кивӗ йал путланӗ,
Шурӑмпуҫ
Ҫӗнӗ ӗмӗршӗн хӗрелнӗ.—

тет вӑл «Октӑпӗр ҫилӗ» йатлӑ сӑввинҫе.

Поет ҫынсем ӗҫленине айакран, куҫлӑх витӗр ҫеҫ пӑхса ларасшӑн мар. Вӑл хӑй те ӗҫлет, хӑй те аслӑ стройккӑра пӗтӗм ӗҫхалӑх массипе пӗрле термешет. Поет ывӑнса канса ларасшӑн мар. Вӑл кӗрешме, ҫапӑҫма йыхӑраӗ, капитталисӑм хӑйӗн пҫитсипе кӗрешӳсӗр парасшӑн маррине ҫухлаӗ. Ҫавӑнпа поет ытти строиттӗлсемпе пӗрле:

«...Пайан манӑн
Ӗмӗтӗм хускалҫӗ,
Ӗҫе тухрӑм
Епӗ—прикатир»—тет.
(«Хурҫӑ ир»).

Унтан тата:

Имленместӗп епӗ,
Пуҫӑма усмастӑп,
Ӗҫпе писҫнӗ
Ҫирӗп прикатир...

Йала савăт сĕтĕрет, интустри йалăн сăнсăпатне улăштарать. Машшин тăвакан пысăк савăтсем йала сотсиалисăм патне туртаççĕ. Машшин, тракгăр, компайăн, електриҫҫĕства етемĕн авалхи, каттăркăллă ĕçне çăмăллатаççĕ, савăнăç кӳреççĕ. Ĕç ĕлĕк ылханлă йапала пулнă. Халĕ ĕç—савăнăç. Сталин йулташ парттин 16-мĕш сйесĕнҫе çапла калапă:—«халĕ сотсиалисăмлă ăмăртура ҫи палли, ҫи ҫапли акă мĕн: ăмăрту çынсен ĕç шухăшĕсене пĕтĕмпех улăштарать. Ĕç халĕ йăвăр, ылханлă йапаларан мухтавлă, ҫаплă вырăна тухса тăрать»—тет вăл. Ку сăмахсене халĕ пĕтĕм тĕнҫе пĕлет. Ку сăмахсем çав-тери тĕрĕс сăмахсем. Ҫăнахах та, сотсиалисăмла ăмăрту савăтсенҫе çех мар, йалсенҫе те, колхоссенҫе те сарăлать. Тукташ савăт темисенҫен те ахалех иртсе каймасть. Савăтсем çинҫеп çыракан поетсем сахал пирĕн. Савăтсăр пуçне йалта сотсиалисăм тума май килменнине Тукташ лайăх пĕлет. Вăл çырать:

Акă, пăхăр:
Хурăçă компайăн
Шăранса пиçейрĕ
Талăкрах.
Пĕҫҫен мар—
Йышпала,
Нумайăн
Кĕçенсе тухать вăл
Савăтран...

Малалла:

Колхоса пĕрлешнĕ
Ĕçхресҫенĕ
Çăкăрпа хисеплĕ
Савăта... («Хурçă ир»).

Халĕ савăт ăш-ҫиккине утарнĕксем улшăнтараҫҫĕ. Васкамасăр, кана-кана ĕҫлени сотсиалисăмлă савăтсенҫе тивĕҫлĕ мар. Утарнĕксем темпа, хăвăрт темпа ĕҫлеҫҫĕ. Сотсиалисăмлă ăмăртупа утарниҫҫĕстевă урлă савăтра ĕҫĕн ҫĕнĕ псхолокийĕ, ĕҫĕн ҫĕнĕ отношенийĕ ҫуралса тухаҫ. Утарнĕксемпе сотсиалисăмла ăмăртса ĕҫлекен рапоҫҫисем 5 ҫуллăх плана 4 ҫултах тума тăрăшаҫҫĕ. Тукташ ҫаксене те асăрхамасăр иртмест, хăйĕн сăвăйуррисенҫе палăртма тăрăшаҫ («Утарнĕк йурри»).

Поет колхосра та пулнă. Анҫах вăл колхос ыйтăвĕсене пĕтĕмпех ҫавăрса илеймест. Вăл колхосри сынсем мĕнле ĕҫлени, пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăнса пурăнни, уйрăм хуҫалăхлă хресҫенсемпе, кӳршĕ-аршăсемпе йепле хутшăнса пурăнни ҫинҫен, колхосăн тупăшĕсене йепле пайлани ҫинҫен, ăмăртуллă ĕҫ йепле пыни ҫинҫен пĕр сăмах та шарламасҫ. Тукташ колхос претҫетаттĕлне хуларан килнĕ рапоҫҫи-шефсене тĕрĕс мар сăмахпа йышăнтараҫ. Тукташ тăрăх рапоҫҫисем колхоса хулари пурнăҫ йăлăхтарнипе кăна тухаҫҫĕ иккен. Акă мĕн калаҫ Тукташăн колхос пуҫлăхĕ рапоҫҫисене:

«Шавлă пурнăҫ хулара
Хĕсĕрлет-тĕр?
Йăлăхтарҫĕ пуҫ ара
Вăл сире те...»

Ку тĕрĕс мар. Ун пек шухăшлакан колхос претҫетаттĕлĕсем пирĕн пулмалла мар. Колхос пуҫлăхĕсем прикатăсене ĕҫ хаваслăхĕпе кĕтсе илеҫҫĕ. Ҫитменни ҫине Тукташ прикати колхоса пырсан иртен пуҫласа касҫен ĕҫлет те тепĕр хут хулана вĕҫтерет. Мĕнле прикатă вăл мулкаҫла ĕҫлекенскер? Колхоса кайса нимĕнех те тумасăр

таварăнсан прикатăна савăтри ытти йулташĕсем çисех йараççĕ вĕт! Кĕскен каласан, Тукташ колхос темине çийелтен кăна шăйăрттарса тухаҫ, ку маттериалсемпе вăл сахал ĕçленĕ.

Поет пусмăрлăхра пулнă ҫухăнпа патраксемпе пĕрле пурнăç картине кĕнĕ. Çавăнпа та вăл ҫухăнсен шухăшне, сăнсăпатне тĕрĕс сăнлăхсемпе кăтартаҫ. Тукташăн Укçук аппăшĕ хăйĕн йуррисенҫе пурнăç питне лайăх палăртаҫ: малтан кĕтÿçĕ, вăрăм пушă, пусмăр, мăшкăл; унтан револютси ҫухăнпа патрака пусмăртан хăтараҫ, пурнăç тивĕçлĕхĕсене пĕтемпех параҫ; виççĕмĕшĕ—ҫухăнсемпе патраксем Октăпĕр çилĕпе хавхаланса, аталанса, çанăсене таварсах çĕнĕ пурнăç тума тытăнаççĕ, рекконструкси ыйтăвĕсене тĕплĕнех ырăна кÿртсе пыраççĕ. Анҫах кунта та Тукташăн пысăк çылăхах пур. Пĕр тĕлте вăл ак çапла çыраҫ:

«Асамçă нуштаран
Хăплантăмăр аран.
Кашни сĕм-ҫухăнах
Пĕрлешрĕç ушкăна...»

Мĕншĕн ҫухăнсем кăна-ха вара? Халĕ вăтамсем те колхос йухăмĕ йеннелле массăллăн çаварăнҫĕç вĕт-ха. Çакна манмалла пулман Тукташ поетăн! Колхос çинҫен çырнă ҫух вăтам хресҫене манса хăварни политтĕкла йăнăш. Вăл йăнăш пысăк хăрушлăхсем умне илсе тухаҫ, унпа кĕрешмелле.

Поетăн хаваслăхĕ пысăк. Хирте ÿснĕскер вăл хире манмасҫ, хире йураҫаҫ:

Савăн, çилĕмçĕм, вĕре,
Савăн, хĕпĕрте!
Санăн ирĕклĕ ҫĕре
Йешĕл уй-хирте,—тет вăл.

Анҫах епӗр хире сарӑ ҫеҫексемшӗн кӑна ырламастпӑр. Хир пире происвотствӑ йенҫен, тырпул ытларах тӑвас йенҫен инттереслет. Епӗр хиртен ытларах усӑ курасшӑн, колхоссемпе совхоссем урлӑ тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартасшӑн. Ҫапах та Тукташ, ӗлӗкхи ӗҫсӗр аптӑранӑ улпутсем пек, хирӗн илемлӗхӗпе киллене кӑна ҫӳрет хӑйӗн сӑввинҫе. Ку кайаллах поет творҫҫӗствине сисӗнмеллӗхех варалаҫ.

Ҫапла ӗнтӗ Тукташ поета ырӑ йенҫен те, ҫитменлӗх йенҫен те кӗскен тишкӗртӗмӗр. Тукташ—ӗҫҫынни. Вӑл ӗҫсӗр ларма йуратмасҫ. Унӑн йуррисем пӗтӗмпех ӗҫ моттивӗсенҫен, кӗввисенҫен вӑй илсе тӑраҫҫӗ. Ҫапах та Тукташ ытлашширех практӗккӑ йеннелле сулӑннипе ытти политтӗкла темӑсене (кулаксен класне тӗп тӑвасси, йала куҫттурлатасси, т. ы. те) тӗкӗнмесӗртерех иртсе кайаҫ. Унӑн сӑввисем стройккӑри тӗрлӗ моментсене кӑтартаҫҫӗ. Тукташ сӑввисем стройккӑн тӗп никӗснех илеймеҫҫӗ, «вак-тӗвексене» кӑна пайаркаласа параҫҫӗ. Ҫапах та вӑл «вак-тӗвексем» паллӑ вырӑнта тӑраҫҫӗ. Вӗсем поет происвотствӑллӑ ыйтусем ҫине тӗплӗнех куҫнине, поет револҫутсишӗн паттӑрла кӗрешнине кӑтартаҫҫӗ.

Тукташӑн ҫӑмӑл ҫӗлхе. Тукташ поет сӑвӑ ӑсталӑхне аван пӗлет. Формӑ йенҫен те унӑн хӑйӗн шкул пуҫланса кайнӑ.

Тукташ халӗ поемӑ ҫыраҫ. Малашне унтан пысӑк йапаласем кӗтетпӗр, вӑл пысӑк йапаласене Тукташ пире ҫырса парасса шанатпӑр та.

Тукташ ҫӑмӑртанса ҫитнӗ поет. Унӑн сӑввисене кашниннех вуламалла. Епӗр хамӑрӑн пролетариллӗ сӑвӑҫсене пӗлме тивӗҫлӗ. **Ф. Лошниккӑв.**

# Йамшăк.

(Сăвăллă фельйеттон).

Хĕлĕхленҫĕ ҫун хавалĕ,
Ак каллех
Йурлатăп епĕ.
Мĕскерех сире халалĕ
Манăн ирĕклĕ хисепĕм?

Шухăшсем
Выҫаççĕ темĕн,
Такама тытса
Тулласшăн.
Кайаллах ҫуна йĕртем-и,
Йе ҫĕре хавас пуласшăн?

«Кирлĕ мар» пуҫи,
«Наҫар»-и,
Пурĕпĕр çыратăп халĕ.
Ман сăвва та
Ҫăваш çарĕ
Хăçан та пулин пахалĕ...

Йупасем кайах йулаççĕ,
Шав-шавах
Кунсем ирteççĕ.
Нумайах пулмасӑ çуллаҫҫĕ,
Ман хаваслăх —
Уй-хиртеҫҫĕ.

Ак пайан
Хайар тăшманăн
Улласа йĕрет çилтăвăл.
Йĕркеленҫĕ шухăш манăн,
Пусăмра çуралҫĕ сăвă.

* * *

Сивĕ çилĕ тапхăр-тапхăр
Туллашать
Тухатмăш йевĕр.
Хуларан
Йала тухатпăр —
«Ĕçсĕрех çӳрет»
Ан тейĕр.

Хаљхи ĕç пурне те паллă:
Перевыпăр,
Йе кампани.
Мана та
«Кĕрхи тупаллăх»
Ăсатаççĕ шăпкравпа вĕт.

Ах, ăçта пуçа тайамши?
Туллашать çеç
Виҫкĕн çилĕ.
Утсене тиверҫĕ йамшăк
Пилĕк пус ыйтса
Çуттиллĕх.

Уҫĕсем ун
Урхамах пек,
Ех, çуни! хура çунийĕ!
— Сăварнишĕн
Самайах, — тет
Çĕтĕк тăлăплă хуçийĕ.

Ђăтаймарĕ
Манăн йамшăк
Йĕкĕте сăмах ђĕнмесĕр:
— Ăçтисем пулан ес, йашă?—
Тесе ыйтрĕ пĕлеймесĕр.

— Катари çав епĕр, тетĕп,—
Талăкран кунта çитеççĕ...
Пĕчес çук ес
Ĕмĕрте те:
«Мăн Тукташ кађђийĕ» теççĕ.

— Е-е, апла иккен...
Пырсађђĕ...
Тÿррипех мана кала-ха:
Тукташран пулас
Пĕр кађђă
Сăвă йурă çыркалаť хађ?

— Еп хамах та-ха
Кађђи вăл,—
Терĕм епĕ именмесĕр;—
Анђах ман поеçи—хăвăл,
Хăвăрах пĕлеттĕр есĕр...

Ыттисем тесен йураť те,
Вĕсенђе хаваслăх пур çав.
Йурриие хăлха çураççĕ,
Сассисем ђăн
Çирĕп хурçă!

— Ыттисем йепле пурнаççĕ?
Кам пулаť-ха
Сирĕн паттăр?
Сăвăççем шăтсах пыраççĕ,
Ну, йепле-ха пурăнаттăр?

— Пурӑнатпӑр йелӗ-йелӗ,
Мӗскерех калам-ха урӑх?
Сут тӗнҫешӗн—
Сар хӗвелӗ,
Поетсемшӗн—сӑвӑ-йурӑ.

Халӗ пурте
Паллӑ сӑвӑҫ,
Вӗҫкӗнлен кӑпа пӗртакҫӑ.
Утмӑл-ҫитмӗл
Сӑвӑ-повӗҫ
Кунсерен илет ретакси.

Сӑвӑсен лаххане тарӑн
Сӑра пек
Йӳҫсе хӑпарҫӗ.
Ваҫанкка веҫех мӑнтарӑн
Ҫавӑнта хаљ
Путса ларҫӗ.

Йатлаҫатӑн,
Ҫӗтӗлетӗн,
Авалтан ҫапла йӑла мӗн.
Паллӑ криттӗк
(Тен пӗлетӗн?)
Туллашаҭ Ҫеркей Йалавин.

Ваҫанккашӑн ку халапҫӑ
Никамран та пулҫӗ кутӑн;
Пырса кӗҫӗ те
Ыйтаҭ ҫак:
— Стаҭйана ӑҫта ес хутӑн?!

Харкашу-тӑк
Харкашу уш,
(Темӗнле шуйттан хӑтарҫӗ!)

Криттĕксен ҫĕрийĕ шухă —
Ҫернилпа пусран тыттарҫĕ

Ку ҫиртен
Тепле сывалĕ
Пурăнан кунри ăсхакăл...
... Йамшăк, йамшăк!
Пăхăр халĕ,
Лашасен урийĕ сакăл!

. . . . . . . . . .

Йамшăкрап сăмах ҫĕнмесĕр
Пынине кура ыйтатăп:
— Ыйхăларăри мĕн есĕр,
Йе сыпас килет,
Хăта,—теп.

— Аптрамасӳҫĕ
Кăшт хĕрмеллĕх
Пилĕк пус хушса парсассăн.
... Лашасем—мерҫен ҫилхеллĕ
Уткăнаҫҫĕ пĕр хавассăн!

— Ҫук, итле мана, вăртахлăм,
Пĕтĕмпех калам
Ахаллĕн.
Пирус хыпрăм та
Пуҫларăм
Арпашмашкăн каллĕн-маллĕн.

* * *

Сăвăҫсем епир нумайăн,
Хăшĕсем хаҫ самайланнă.
Хушăран йурланă майăн
Аталанăп тен еп хам та.

Сăввине...
Инçех кайматпăр,
Савнисем çинҫен çыратпăр.
Йе сăмах-мĕн
Тупаймасăр
Трактăрсем кӳлсе йаратпăр.

«Сунталра» кăçал Миттаван
«Асамаҫĕ» курăнмасӑ-ха.
«Ытлашши йепле йăгатăн?»
«Пайанпа çеç пурăнмаç вĕт!»

Хусанкай ак
Куҙанмасӑ-тĕр,
Уншăн мĕн?
Сăвах шакаççĕ!
Ну уш хăй те питĕ маçтĕр...
. . . . . . . . . . .

Уппала мĕскер калаçăн,
Тахçанах вăл
Ферĕç, тамккă!
Ахаҙ мар çав ирĕн-каçăн
Сăввинҫе ун
«Çирĕп рамккă».

Хусанкай вăл
«Пушкин тусĕ».
Пурăнаççĕ, тет, йĕркеллĕн.
Çавăнпа пуçри картусĕ
Хывăнса ӳкейрĕ Келин.

Пире мĕн?
Ҫĕрӳ çупаӑ-и,
Сăввунах ес ытала пĕр.
Самайах сăмах куматĕ

«Ирĕк» шухăшлă
Алакĕр.

Сăмахсем
Ђăнах та вирлĕ,
Йарăнаççĕ кассăн-кассăн.
«Сунталра» хаљ
Шăлапирлĕх
Пиђетленђĕçĕ Йанкасăн.

Леш Аттайĕ
Çĕрĕн-кунĕн
Шутласа хурай пĕр çемĕ.
Пиђетре пулас-ха унăн
Темĕнле роман-поемă.

Кашари Йехрим Йăванĕн
Сăввинђе кăçал реакси:
Ыталанă
Тем çăвашĕн
Ăна вăкăр контрактатси.

Таңккуха аса илеп-ха:
Йĕпĕлти вăл,
Шељмă пуçĕ!
Пуçĕнђе—лупаслă кепкă,
Хер çинђех çав
Хăйĕн куçĕ:

— Тупа-турăшăп та, Райă,
Пирĕннех, тет,
Вăй илтерĕ...
Ман çапах та—
Шăнттарайăн
Ĕненес-тăвас килмерĕ.

Шултăркана тӳпе пĕлĕт
Уйăха тытса тулларĕ.
Вулакан хăйех те пĕлĕ,
Каласси
Манран пулмарĕ.

Хавасланнă шухăш картах
Темĕне сиссе
Хускалҫĕ.
Тĕп столитсă—
Шупашкар та
Таксанах куçран çухалҫĕ.

Шăнкăравĕ
Тапхăр-тапхăр
Ёнтерет кĕрпеклĕ çемĕ.
Хуларан
Йала тухатпăр—
Акă вăл
Уй-хир илемĕ!

Ах, ăçта пуçа тайамши?
Туллашаҫ çеç
Виҫкĕн çилĕ!
Утсене тăратрĕ йамшăк,
Çирĕм пус ыйтаҫ
Çуттиллĕх.

Уҫĕсем ун
Урхамах пек,
Ех, çуни,
Хура çунийĕ!
Никама та хурламасп еп,
Сывă пул,
Ăлав çыннийĕ!

1928 ç., Шупашкар.

# I. КĔРХИ ТУПА

## 1.

Йурлах, йурлах, йупах ҫĕрем,
Сиксех вĕре, ирхи телейĕм!
Кунҫул тĕррийĕ ҫĕнĕрен
Сире пула теветленейĕ.

Ҫĕлхем ҫеҫен. Пехил илме
Кĕрхи тивлет ун арҫара-им?
Пайан ăна хавас ҫилпе
Никам килсе тытса ҫараймĕ.

Кĕрхи илем—шупка-кĕрен,
Ĕҫки-ҫики йепле ун аслă!
Кунран-кунах вăл ĕҫкĕрен
Ерехсĕрех тухса сунаслăн.

Ҫампах йыхрав ҫеркки илсе
Йури хире тухса тăрайрăм.
Шупка-кĕрен кĕрхи ҫиле
Вăйпах тытса тупа тăвайрăм.

Йĕри-тавра темҫул хавас.
Йурлах, йурлах, ирхи телейĕм!
Йупах ҫĕремҫĕм йулхава
Текех нихҫан теветленеймĕ.

1928 ҫ.

## 2.

Уйăх, уйăх! пит те çутă,
Уйăх тулпă тахçанах...
Сывлăмпа ес питпе çу та
Тухса йăпшăн пахҫана.

Тулли уйăх хĕпĕртенҫĕк,
Мĕскĕнлетрĕ куçсене.
Тусăм, саншăн еп пĕр йенҫĕк
Илсе килтĕм куҫҫенеç.

Иккĕн епĕр çума-çумăн
Ларса пуплĕпĕр пĕрре:
Мĕншĕн пурнăç пулнă ҫухăн,
Мĕншĕн çуннăҫҫĕ ҫĕре.

Пуçăмра ман ĕмĕт ҫупĕ,
Çӳçентерĕ хусаха.
Саншăн еп тăвап пиҫҫу пек
Пуçлăп хамăн сăмаха:

Тусăм, тусăм! ех, итлеҫҫĕ,
Тăнласамҫҫĕ ес мана.
Пире ĕлĕк хĕскĕҫлеҫҫĕ
Хурлă йăвăр самана.

Пурăнаттăмăр мăнтарăн,
Тертлĕ пурнăç вĕçĕнҫе.
Ех, мĕн ҫул тар йухăнтарнă
Çĕр улпуҫĕн ĕçĕнҫе.

Пурăнаттăн выççăн-тутгăн,
Йалан хуйхăллă ҫĕре.
Ес ĕçлеттĕн те, улпутăн—
Пыл та çуҫҫĕ крекере.

Пуçăнта сан çĕлĕк кивĕ,
Улпут—пите санăнпе.
Анҫах ку вăл ĕлĕкхи гĕт,
Ĕлĕк пулнă çавăн пек.

Вăйлă тăвăл сиксе тухрĕ,
Мула çĕмĕрҫĕ шăпах.
Хура халăх пуçне ухрĕ,
Урăх тытрĕ вăл шăпа.

Йавăр пулҫĕ иргнĕ тапхăр...
Халĕ йултăр мапăçа.
Пайан хамăр ак туптатпăр
Кĕтнĕ ирĕк пурнăçа.

Пурнăç çĕнĕ! Пурнăç урăх!
Пайан есĕ çĕн етем.
Çавăнпа та урăх йурă
Саншăн епĕ çĕнетем.

Çеçен хирĕ уççăн-уççăн
Шăрантарҫĕ хурçă сас.
Ех, итле-ха, хура куçăм,
Урăх камшăн сăвăлас!

Хирĕ аслă... Кассăн-кассăн
Нумай пусăллă йăран.
Епĕр иксĕмĕр хавассăн
Хирте ĕçлĕпĕр вăйран.

Теветленĕ çĕнĕ çемĕ,
Тĕлĕнтерĕ йал-йыша.
Уй-хир тăрăх тек кĕçснĕ
Харсăр хурçă ут-тыха.

Епĕ пулăп трактăрисĕ,
Тавăрттарăп çереме.

Кăпăкланнă хĕр сăрисĕр
Çĕклентерĕп ҫĕреме.

Кĕренленнĕ ирхи шуçăм,
Ăшшăн пăхĕ хир çине.
«Савнă тусăм, хура хуçăм»...
Тесе йурлăп ирхине.

Çÿçĕмсем çурхи кăлкапăн
Сапаланĕç ик йенне.
Вара тин мана ăнлапăн
Йепле каҫҫă иккенне.

Хуйхăрмашкăн ес пăрахăн
Çакă пысăк ĕмĕтрен...
Уйăх вăрттăн та вăрахăн
Кулса пăхĕ пĕлĕтрен.

3.

Çап-çут çава çурла пек
Ҫĕлхем мукалиҫҫеп
Хама кура йурлап еп
Тăван уй-хир çинҫен.

Тăван уй-хир ытамĕ
Йăпатрĕ инçерен...
Йарам-и те тытам-и
Ăпа еп çилхерен.

Йурла, уй-хирĕм, савăн,
Ҫупту йăваш çиле!
Ман та пайан йусавăп
Йурра сĕвес килет.

Епир—хаваслăх çарĕ
Пурте хĕрÿ ĕçре.

Пĕрле йурра пуçлар-и,
Пуçлар-и çепĕçрех.

Пĕри тытар шĕнейккă,
Теприйĕ сăвăрар.
Текех куççуҫ çĕнеймĕ
Сĕткенлĕ сăвăра.

Йурла, уй-хирĕм, савăн,
Тустар йăваш çиле!
Ман хамăн та йусавăн
Çапла йурлас килет:

Çеçен хирте сухаҫҫĕ,
Шурутипе майан...
Сире çĕпелнĕ каҫҫă
Масар ҫаваŤ пайан.

Сĕнни пайан çĕптерĕ
Тумхахлă уй-хире.
Хăна пулма ҫĕнтерĕ
Йала-йыша, пире.

Çакна кура йурлап еп
Тăван уй-хир çинҫен.
Çап-çут çава çурла пек
Ҫĕлхсм мукалиҫҫен.

Йурла, уй-хирĕм, савăн,
Çĕп пурăнăç тавра.
Еп те пайан йусавăн
Йурларăм виç çавра...

## 4.

Каçĕ тĕттĕм те хура,
Тулли уйăх—пухура...
Пĕлĕт сутă тĕкĕрлех,

Уйăх кулӳĕ сар хĕрле.
Уйăх, уйăх, ӳун савни,
Кампăн есĕ хумханни?

---

Каçĕ тĕттĕм те хура,
Йалĕ тутлă ыйхăра...
Ыталарĕ ӳĕрене
Кĕрхи харсăр вĕрене.
Ирĕк паӳĕ ӳĕлхеме
Ылтăн-кĕмĕл шўлкеме.

---

Каçĕ тĕттĕм те хура,
Сивĕ çилĕ вăйăра.
Савăн, çилĕмçĕм, вĕре,
Санăн ирĕклĕ ӳĕре.
Савăн, уйăхăм, ташла!
Çамрăк сăвăç Тукташла.

5.

Ула йытă—уйăхĕ вĕрет,
Кĕрхи хурăн тăлăххăн йĕрет...
Лăплансамӳӳĕ, хурăнăм, лăплан,
Ӳĕрене ес мĕншĕн кăтăклан.
Ах, тархасшăн, уйăхăм, тăпла:
Вĕрме ӳарăн урнă йытăлла!

— Ан ӳăрман ес, тусăм, ан кала,—
Сăмах хушрĕ хурăн манпала.—
Манăн пуçăм усăнӳĕ çĕре,
Сисĕнмесĕр хуçăлӳĕ ӳĕре.
Ан ӳăрман ес, тусăм, ан кала,
Хуйхăм йывăр... Манăн канмалла...

Аставатни, есĕ ху пĕҫĕкçеçҫĕ,
Йешĕл улăх сана илĕртеҫҫĕ.
Аставатни, сĕм вăрманĕ ĕретĕн...
Ирсерен çырлана ес çӳреттĕн.
Вăрманта шухă çилĕ кашлаҫҫĕ,
Тапхăр-тапхăр сана аҫашлаҫҫĕ.

Сар хĕвел ҫӳхенеҫҫĕ хавассăн,
Ах, тăхта, ун çинҫен каламастăп...
Выртмара хĕрсемпе ашкăнаттăн,
Ах, тăхта, каламастăп кăна та...
Харсăр çил—сана йевĕрлĕ ҫупкăн,
Çук, ан ыйт, ун çинҫен калас çук ман.

Пăшăрханҫĕ пулас çамрăк хыр та...
Васкасах уруна есĕ сыртăн.
Ман çине пăхса илтĕн те тӳнтерĕн:
— «Сывă пул, еп кайатăп вĕт»—терĕн.
Хулана ун ҫухне есĕ тартăн
Уй-хире тăлăхахçке хăвартăн...

Малтанах ес мана та саваттăн,
Халĕ ак нимĕн те каламастăн.
Халĕ ак лăпкамастăн пĕрре те,
Çавăнпа ирĕн-каçăн йĕретĕп.
Çавăнпа тулли уйăхĕ—анҫăк,
Пит ĕшенҫĕк те питĕ хурланҫăк...

---

Ула йытă—уйăхĕ вĕрет,
Кĕрхи хурăн тăлăххăн йĕрет.
Лăплансамҫҫĕ, хурăнăм, лăплан,
Ҫĕрене ес мĕншĕн кăтăклан.
Ах, тархасшăн, уйăхăм, тăнла:
Вĕрме ҫарăн урнă йытăлла!

Сирĕнпехçке епĕ, сирĕнпех
Йекĕтлентĕм уйăм-хирĕмрех.
Маншăн есĕр халĕ те паха:
Улăштармăп хамăн сăмаха.
Ђас ак епĕ тавăрнăп калла
Вăратмашкăн тутăхнă йала.

Йуларан еп килĕп йур çусассăн,
Йал-йыша ташлатăп хурçă саслăн.
Çурхине хускалĕ трактăр шавĕ,
Савăнпа та халĕ тăрашса вĕт;
Савăнпа та епĕ вĕткĕнетĕп,
Трактăрис пулмашкăп вĕренетĕп.

Ђас ак епĕ тавăрнăп калла
Кивĕ пурнăç уртăннă йала.
Ах, тархасшăн, хурăнăм, лăплан,
Ђĕрене ес мĕншĕн кăтăклан.
Ула йытă—уйăхăм, тăнла:
Вĕрме ђарăн урнă йыталла!

Нойапĕр—теккапĕр, 1929 ç.

## Йарма купăс, икĕ рет...

Йарма купăс, икĕ рет,
Шăнкăравлă çемĕ,
Сасси уçă.
Сана аса илтерет
Шухăшланă-çемĕн,
Хура куçăм.

Аҫаш шухăш пуçăма
Ыталаса илҫĕ,
Çунатланҫĕ.
Кĕрен-йарăм шуçăма
Ҵуп тăвассăм килҫĕ—
Ҵун хурланҫĕ.

Ĕмĕт вĕçрĕ хирелле...
Тунсăхланă йурă
Ыйтрĕ ирĕк.
Кĕмĕл тумлă ирпеле
Мана хапăл турĕ
Йешĕл çирĕк.

Хаҫ çĕнелнĕ уй-хире
Ытарма пĕлмесĕр
Хирĕç тухрăм.
Ҵир-ҫĕр витнĕ тумтире

Нимĕн хĕрхенмесĕр
Хывса утрăм.

Кунта епĕ инçерен
Ђиртен сывалмашкăн
Тухса килтĕм.
Сана, тусăм, ђĕререн
Нимпе манайманшăн
Аса илтĕм.

Йарăм-йарăмăн йăран,
Пайарка ĕретĕн
Ђавка-пуçĕ.
Халĕ ес те вăйăран
Пурнăçа кĕретĕн,
Хура куçăм!

Лăпкă тинĕс пусăра
Кăмăлма хăпартрĕ
Ирхи сулхăн.
Кĕмĕл купăс сасăра
Ђĕреме вăратрĕ
Кăмсамулккă...

Çавăнпа та уй-хире
Икĕ ретлĕ купăс
Илсе килтĕм.
Кăмсамулккă сар хĕре
Тупсăхпала хутăш
Аса илтĕм..

1928 ç., Мăн-Тукташ.

## Çĕртме çинҫе.

Таҫă-вăйă ăсти ШАЛАНКĂНА.

Çĕртме курĕк йешĕл хумлă,
Ирхи сывлăм—кĕмĕшке.
Аслă улăх кĕмĕл тумлă,
Ҫуна уçрĕ мĕнешкел.

СаламлаŤ хире пăраçнĕк,
Çĕртме уйăхĕ—кĕрў.
Унпала йепле çураçмăн,
Йепле ҫăттăр-ха ҫĕрў?

Темĕнпле ҫĕре варанĕ,
Çунса пулĕ кăварах.
Кассăн-кас ана йăранĕ
Йĕркеленҫĕ сăвăра.

Сĕткен йухрĕ сăвăран та,
Ҫĕрĕ йухăмлă сĕткен.
Ирхине ирех вăрантăм
Шупка шуçăм тухиҫҫен.

Кун-каçах хирте ĕçлерĕм—
Хулăм-çурăм—лăштăрах.
Касҫен виç ана сўрерĕм,
Тата йулҫĕ ик хăрах.

***

Хĕвеланĕç шерепийĕ
Сапалаŧ шупка хĕлхем.

Улăха та йеррипенĕн
Çитсе пухăнҫĕç хĕрсем.

Ҫăнкăр-ҫанкăр суха тимĕр...
Манăн—плукăпа лашам.
— Ей, ан кай-ха, Улатимĕр,
Санпала кăшт паллашам.

Пĕлейместĕн-и мĕн есĕ,
Кул-ха уççăн çĕкленсе!
— «Тата ман сана хĕнес-им
Хуларан-ха ку тесе».

Çакăн пек кулса хаваслăн
Каçа йултăмăр, çĕрех.
Улăх, улăх, йепле аслă!
Саншăн çеç хавас ҫĕрем.

Астуман та, çĕр çăтасшĕ,
Çырас пулĕ пустуйран:
Ҫĕрессипех Таçук ашшĕ
Хаплаттарҫĕ йӳç уйран.

Çĕртмере вĕт вăйă-кулă,
Хуйху сӳнтĕр—тух, ташла!
Алă çуптăр аслă улăх,
Нуккă, йар-ха Тукташла!

* * *

... Манăç пулҫĕ йăвăр хуйăх
Тӳпе пĕлĕт ҫăлтăрах.
Пашалу пек тапҫам уйăх
Йăпатаť çут çăлтăра.

Ылттăн уйăх та сухаçă
Ыйхăларĕ тӳпере.

Кĕçĕр епĕ—сарă каҫҫă
Ыталарăм пĕр хĕре.

— Йурататăп сана, ҫунăм,
Уйăхран та, хĕвелтен.
Саншăн çеç йалан еп çунăп
Вилсе çĕре кĕриҫҫен...

. . . . . . . . . .

— Ан аташ-ха, Иҫук... ӳлĕм..
Ытла сĕре ан калаç...
Хаҫ кӳлер-ха ирхи кӳлĕм,
Сывă пул-ха... ыран каç...

Ну и шеҫмă хĕрĕсем те,
Ултталаймăн нимĕнпе.
Ăнланаç иккен вĕсем те,
Килĕшмеççĕ пирĕнпе.

---

Уçăлайрĕ кĕрен ҫатăр,
Çĕрĕпех еп çывăрман.
Ытлашши пулсан—каçарăр,
Шухă пуçăм—сĕм вăрман.

Есĕр хăвăр та пĕлеттĕр
Ирĕк ҫунлă хусаха.
Хĕрĕ хаҫ те çĕтĕлет-тĕр,
Çитĕ пуҫ ҫуптуса та...

Пурпĕрех пайан ĕçре еп
Никамран та иртерех.
Çĕртме туй ҫуна çĕклерĕ,
Ирхи сывлăмлă ерех...

Сар хӗвел ҫӳлех хӑпарҫӗ,
Ихӗрет леш-хай хӗрле.
Хӗрӗн кусӗ кӑвакарҫӑн—
Хӑй ӗҫлет манпа пӗрлех.

Ийуљ, 1928 ҫ.

## Атăл.

Пĕлĕте сухалаŭ
Сар хĕвелĕ,
Çурхи кун илемпе
Мухтанаŭ.
Атăл шыв хумханса
Йухнă мелĕн
Çамрăк ђунăм пайан выљанаŭ.

Йăлăмран ăшă çил вĕрсе килђĕ
Атăла питĕнђен лăпкаса.
Йулашки çутă пăр
Хумпа вилђĕ
Хĕллехи куççулне йухтарса.

Хумханаŭ çурхи Атăл илемлĕн,
Ун çине хаљ пăхаŭ Шупашкар.
Илемпе унăнпе еп пикентĕм,
Çавăнца ман ђĕре
Йăваш мар.

Атăл!
Санăн пĕвŭ пит те ђаплă,
Çамрăка ес йаран шухăша.
Хумусем хушăран
Сан асаплă,
Вилĕмпе туллашаç тăтăшах.

Сан çире кимĕсем
Йĕр йĕрлеççĕ

Лăпкă хум йуррисен кĕввипе.
Хушăран пулăсем тĕр тĕрлеççĕ
Аслă, çутă шывăн хĕррипе.

Ытамна прахутсем ыталаççĕ,
Ах, йепле савăнатçке ӳĕре!
Атăл, Атăл!
Мана ес калаӳӳĕ,
Ӳăвашсен тĕп хули миçере?

Еп пĕлетĕп:
Аваллăх вăл ватă,
Ун йурри—ĕмĕртен ĕмĕрех...
Ман çапах пайанхи
Вăй-хăватăм
Çĕкленет пимĕнрен вирлĕрех!

Пурпĕрех ĕçпе мул ес паратăн,
Емĕртен хурлăхри халăха.
Ху ӳапна авалах хăваратăн,
Хăваратăн ĕмĕр паллăха...

Сахал мар сан умна пуç тайаççĕ.
Сахал мар сан ӳапу—кунпа çул;
Пĕр шыв мар санпа ал тытайаççĕ,
Шутласа пăхсассăн—
Темĕн ӳул!

Епĕ хам
Сан пекех пулаймарăм,
Çыр хĕрне килсе тăтăм йури.
Ӳĕрери кĕвĕпе вунă йарăм
Йĕркелерĕм хаваслăх йурри!

1928 ç.

## Укçук аппа йуррисем.

ПĔРРЕМĔШ ЙУРĂ.

Епĕ çутă тĕнҫере
Хурлăхпа çуралнă.
Манăн ирĕклĕ ҫĕрем
Мăшкăлпа хуралнă.

Иртнĕ пурăнăç мана
Тыткăнра усрарĕ.
Панулми пек сăнăма
Çеçен хир вăрларĕ.

Уй-хир тăрăх сĕтĕрнсе
Пĕве çитрĕм епĕ.
Пурнăç кулҫĕ ихĕрсе,
Сӳнҫĕ çав хисепĕм...

Йăвăр пулҫĕ ку шăпа,
Çавăнпа еп тайлăк.
Ĕмĕр иртрĕ пушăпа
Типнĕ çӳлçĕ майлă.

Епĕ çакă тĕнҫере
Хурлăхпа çуралнă.
Манăн ирĕклĕ ҫĕрем
Асаппа хуралнă...

## ИККĔМĔШ ЙУРĂ.

Кашни ҫăлтăр тӯпере
Ҫиҫĕм пек ҫиҫет.
Манăн ҫăлтăр ђĕрере
Лăпкăн ђĕлкĕшет.

Пысăк ĕмĕт пуҫăмра
Ҫиҫрĕ те кĕҫех,
Ирхи ҫутă шуҫăмлах
Тытăнтăм ĕҫе.

Сăвă-йурă калама
Тухрăм ђăвашла.
Сулхăн ҫилĕ лăпама
Вăрттăн ађашлат̆.

Ҫилĕ йешĕл уй-хире
Ђуптунийĕ шет
Пĕве ҫитнĕ сар хĕре
Пит те килĕшет.

Савăн, ҫилĕмҫĕм, вĕре,
Савăн, хĕпĕрте!
Санăн ирĕклĕ ђĕре
Йешĕл уй-хирте.

Сар ђеђеклĕ пусăра
Кăмăллă мана.
Ирăк хамăр алăра,
Ҫĕнĕ самана.

Савăн, хирĕмҫĕм, ташла
Ҫĕнĕ ĕмĕтрен!
Сана епĕ йулташ а
Саврăм пĕђĕкрен.

Кӳрентермӗç тек пире
«Тарçă» сăмахпа.
Çӗнететпӗр ӗмӗре
Ĕçлӗ халăхпа.

Çакă шухă вăхăтра
Хамăршăн хуçа.
Савалатпăр советра
Хамăр пурнăçа.

Кашни çăлтăр тӳпере
Канăçлăн çиçет.
Манăн çăлтăр ҫӗрере
Уççăн ҫӗлкӗшет.

ВИÇÇӖМӖШ ЙУРĂ.

Йухах, кунçулăм, йух,
Йумах пуçланнă ҫух!
Тивлет сунан çӗре
Савсах йурла, ҫӗре!

Кунçул пире хавас,
Тата мӗскер калас?
Шупка-кӗрен çиле
Мӗнле парне пиллес?

Асамçă нуштаран
Хăплантăмăр аран:
Кашни сӗм ҫухăнах
Пӗрлешрӗç ушкăна.

Мӗншӗн пуçа усас?
Саватпăр колхоса!
Пӗрлешӳллӗ ӗçе
Хисеп вӗçрен-вӗçех.

Салам сана, тӗнҫе,
Ҫӑваш ӗсҫыннинҫен!
Телейлӗ ҫул ҫине
Тухайрӑмӑр тинех.

Йухах, кунҫулӑм, йух,
Йумах пуҫланнӑ ҫух!
Тивлет сунан ҫӗре
Савсах йурла, ҫӗре!

ТӐВАТТӐМӖШ ЙУРӐ.

Кам-ши, кам-ши каҫ йурларӗ?
Сасси кайрӗ йан та йан!
Савнӑ тусӑм, маншӑн мар-и
Хаваслантӑн ес пайан?

Маншӑн мар-и йурӑ-кӗвӗ
Лӑпкӑрах та, ҫепӗҫрех?
Епӗ ҫухӑн ҫӑваш хӗрӗ
Хӗрсе ҫитӗнтӗм ӗҫре.

Сан пекех еп сӑвӑ-йурӑҫ,
Ирӗк йурӑ кӗвӗлеп.
Сӑввӑмсем ман тупа турӑҫ
Ҫулҫӳревҫӗ хӗвеле.

Их, хӗвелӗ! Ҫырлахтрах тур!
Аскӑн хӗр пек ихӗрет.
Хирӗм тӑрӑх хурҫӑ трактӑр
Аслати пек мӗкӗрет.

Хушка пуҫлӑ тимӗр уҫӗ
Килҫӗ ӗмӗр хӑнана.
Урлӑ-пирлӗ хӗрес хуҫӗ
Сапаланҫӑк йӑрана.

Акăш-макăш анасемшĕн
Вилĕм çитрĕ ĕмĕрех.
Шурăмпуçĕ çĕн етемшĕн
Кĕренленҫĕ тӳпере.

Хирĕ аслă! Хирĕ хапрăк!
Хурçă саслăн кĕвĕçет.
Епĕр харăссăн тухатпăр
Пысăк ĕмĕтлĕ ĕçе.

Çуралман еп йуратушăн...
Çак тивлетлĕ çутă ир.
Килĕм-йышăм—пысăк ушкăн,
Сарă каҫҫă—çеçен хир.

Кам-ши, кам-ши каç йурларĕ?
Сасси кайрĕ йан та йан!
Савнă тусăм, маншăн мар-и
Хаваслантăн ес пайан?

## Çпектаккăл хыççăн.

(„Тапхăр татăкĕ“ поемăран).

...Шурăмпуç хĕрелет
Йеррипен,
Çăлтăрсем ђÿхенеççĕ,
Сÿнеççĕ.
Кĕмĕл пек йуханшыв хĕррипе
Йурату кĕввисем илтĕнеççĕ.

Пахђара сасђÿ çук.
Ыйăха вĕçлеме
Салапайрĕ-ха веђђĕр.
Тÿпери услам çу—уйăха
Йытăсем вĕрнипех
Сÿнтереç-тĕр.

Çатрака улмуççи хÿттинђе
Йанăшса тилмĕрнийĕ
Ђĕтренђĕ:
— «Саншăн çеç,
Саншăн çеç çут тĕнђе,
Саншăн çеç ирĕлетĕп,
Ђĕкеçĕм!

Саншăн çеç
Çак тивлетлĕ çĕре
Йуррипе йăпатаť
Сарă кайăк...

Кăмăлу пулмасан кĕçĕрех
Йунăмпа пăвăнса
Сарăхайăп...

Кăмăлу пулмасан пайанах
Çĕтерем
Сисĕнми сассăма еп.
Каласамҫҫĕ мана—
Айвана
Ҫĕрери йуратăвăн сăмахĕ!

Ыталаҫҫĕ ҫеҫен пĕвĕме,
Лăплантарҫҫĕ
Аҫаш ҫĕреме те,
Есĕ мар-и
Хавас кĕввĕме
Манăнпе хĕрхенмесĕр
Ĕметĕн?..»

Ӳркепсе
Сăмах хушрĕ Ҫĕкеç.
Кĕçĕр каç вăл
Кипем те ĕшенҫĕк:
— Ман сăмаххăм санпа пĕҫĕк çеç,
Ытлашши
Ӳпкевпе нĕйкĕшен-тĕк.

К А Ҫ Ҫ Ă:

— Йурату пăталарĕ мана,
Кăкăрти ҫĕрере
Шурă тĕтĕм.
Çавăнпа
Сан патна хăнана
Кăмăлма пусарма
Епĕ кĕтĕм.

ҪЁКЕҪ:
— Кулăшла калаçатăн..
Анҫах
Йуратăвăн ултавлă
Пăйавĕ.
Намăса кăшт пĕлес вăтанса,
Сăмахху санăн
Тĕлсĕр суйа вĕт?!

Ытлашши супĕлтетрĕн пайан,
Тивĕçе улталарăмăр пулĕ...
Ман атте авă
Сумлă пуйан,
Есĕ ху?
Йарунка...
Кăмсамулĕс!...

Сирĕн пек çамрăка йуратма
Нимĕнле хĕрупраçĕ те
Пĕлеймĕ...
Кăмсамулшăн мана çуратман,
Есĕ те
Çивĕтме тĕвĕлеймĕп!

Сирĕн ҫыс
Ҫухăнсемшĕн кăна,
Мĕн таран савнине
Еп куратăп.
Çавăнпа
Нĕйкĕшен сассăна
Çурăк ҫан вырăнне çеç
Хуратăп...

. . . . . . . . .

Шурăмпуç

Йеррипен хĕрелет.
(Васкаса темĕнех тăвас çук ун).
Çамрăк пуç
Усăнаť çĕрелле
Çулăмпа кăварланнă
Васçукăн.

— «Ех, Ђĕкеç!
Çакăнассăм килет...
Йулашки йуррăма
Хађ йурлатăп.

Алăмра манăн
Хăмăр пилет,
Анђах хађ...
Унпала уйăрлатăп...

Сывă пул, кăмсамул,
Кĕçĕртен!
Саншăн еп
Усăллах пулаймарăм.
Ђун-ђĕре
Çулăмланнă çĕртен
Ес мана нимĕнпе çăлаймарăн.

Хуйхăпа сехĕрленнĕ ђĕре,
Урăх камшăн тата
Ес хумханăн?
Кĕçĕрех парăнап,
Кĕçĕрех!
Савнă тусăм,
Ђĕкеç...
Епĕ...—санăн...»

Çакăн пек
Сăмах пађĕ Васçук,

Шурă шупăр çине
Пуçне тайрĕ.
Кăмсамул тек ăна
Савас çук,
Ун ҫĕри
Ҫĕкеçе сутăнайрĕ...

Пилетне
Йарса илҫĕ алла,
Йулашки уçса хупрĕ,
Мăнтарăн.
Ех, айван!
Каласамҫҫĕ,
Кала!
Камшăн ес
Ҫĕрӳне пăталарăн?!

Ылханатăп сана,
Ылханап!
Йурăра урăх ес
Тивĕçленмĕн.
Аса ил:
Мĕн калана сана
Влатимĕр
Илйиҫăмăр
Ленин?!

Çук, ҫĕнмест...
Шарламарĕ Ваççук.
Уйăх çеç хуйхăрса
Пуçне тайрĕ.
Кăмсамул тек ăна
Савас çук—
Ун ҫĕри
Ĕмĕрех сутăнайрĕ...

# Уй-хир йӗрет.

(Ескис).

ХӖР ЙУРРИ:

Уй-хирӗм,
Уй-хир!
Мӗншӗн ес йӗретӗн,
Мӗншӗнех салхуллӑн
Ђӗтӗрен?
Ием-йешӗл тумтир
Куҫӑн та кӗретӗн
Хывӑнса ӳкейрӗ
Сан ҫирен...

Килђӗ те ҫухалђӗ
Йумахри илемлӗх,
Пурне те хӑварђӗ
Тӗлӗке.
Йӑвӑрӑн хускалђӗ
Хӑравҫӑ хӗвелӗ,
Вӑтанса пытанђӗ
Ҫӗлӗкпе.

Вӑрмана ҫитетӗп—
Вӑрманӗ ҫаралнӑ,
Сисрӗ пуђ пайан вӑл
Хурлӑха.
Ӑҫта сан илемлӗх,

Йешӗрен ҫаранлӑх?
Есӗ те йӗретӗн
Кӑлӑхах.

Ҫатрака вӑрманӑм,
Мӗншӗнех йӗретӗн?
Пӑрахсам
Самантшӑн ҫӗтреме!
Илеме вӑрларӑн
Куҫӑн та кӗретӗн
Прахӑҫа кӑлартӑн
Ҫӗреме...

САСӐ:

— Ей, кам унта?
Кам?!
Кам рӑл
Йӗрет ҫунтан?
Кил!
Сан ҫине пӑхам,
Курам-ха куҫӑнтан.

Паҫук! Паҫук!
Есех-и ку?
Йепле пурнан,
Йепле?
Мӗн-ма кулмасӑ
Ҫӳхе туту
Ҫурхи сар ҫеҫекле?

Пӗрне пӗри
Мӗнех калар
Ирхи тивлетлӗхпе?
Аҫа еппин,

Йурра йарар
Кĕрхи çил кĕввипе.
Сăнамалла кусран пăхса
Ђуна ан асапла.
Мĕншĕн пурнас-ха
Тутăхса,
Кала:
Тĕрĕс?
Çапла?
?

Пасук ђĕнмест...
Пĕлместĕп, темĕн,
Мĕскер ун ђĕринђе.
Уй-хир çаплах
Йĕрет киђемĕн
Салхуллă кăввипе.

— Аҭа, еппин, ташлатпăр-и?
Пуçлас-тăк—хамăртан!
Пайан арçын—
Ĕç паттăрĕ,
Хĕрарăм та пĕр тан!

Кала, Пасук,
Веçех кала:
Мĕн-ма салху лаpан?
Йури
Пуплесшĕн санпала
Еп килтĕм
Хуларан.

Х Ĕ Р:

— Пĕлес тесен
Пĕлтерĕп те,

Анҫах... пӗр саншӑн ҫеҫ.
Мана
Суйа тӳнгерлӗхпе
Ултав тӑвать
Тӗнҫех!

Темҫул калас пулсассӑн та
Кӗскен калап кӑна:
Арҫын ҫӗри курсассӑнах
Питрен вут тӑкӑнать.

Ик-виҫӗ ҫул
Куҫҫулӗпе
Асап мана ҫийет.
Ик-виҫӗ ҫул
Таса кӗпе
Кӗмен-тӗр ман ҫийе.

Атте-анне тивлетлӗхне—
(Ах, тултӑр ун шаҫҫи!)
Пите кӗҫе ҫӗлетрӗҫке
Йалти пуйан аҫи.

Йалан
Турра тупа туса
Саваҫҫӗ вӑл мана.
Пайан веҫех ак астусан
Ҫӗрем хавшакланать...

Пӗрре,
Хӗвел ансассӑнах
Вӑл килҫӗ ман пата.
Сӑмах ҫине витет сӑмах:
«Сана еҫ йуратап...»
Нумай каларӗ,
Темӗн те:

«Çупатăп саншăн çеç...»
Ăна епĕ итлерĕм те,
Унтан...
Калас килмест...

* * *

Çут уйăх
Илемлĕх сиплерĕ
Лĕп сывлăм лăпкана çĕре.
Вăл каç еп
Нимех те сисмерĕм,
Нимех те туймарĕ ҫĕрем.

Кунçулăн
Васкавлă хисепĕ,
Ак çитрĕ
Архаҥ те,
Пукрав...
Ах, турă!
Хамах еп сисетĕп,
Сисетĕп,
Ăшра ман пăтрав.

Ман
Ĕлĕк йуратнă савнийĕм
Савмашкăн пăрахрĕ тинех:
«Ан тив,
Леш иртнĕ каçхийĕн
Инкекĕ тийентĕр хăйнех...

Еп мар вĕт,
Хăйех вăл айăп...
Йуратнă...
Мĕскер-ха вара?
Ыран еп урăх тупайăп,

Кускалăп
Теприйĕн тавра.
Ђеђекĕн сĕткенĕ типсе-тĕк
Кăлар та ывăт йури!»
Çапла пуйанăн хисепĕ,
Çапла ун пулђĕ йурри...

Вара еп...
Хĕр пуçăн çуратрăм,
Питме çĕлерĕм кĕçе...
Ах, мĕншĕн ăна еп йуратнă?
Ах, мĕншĕн пĕтмен-ши кĕçех?

Ухмах-тăк
Мĕскер-ха тăватăн?—
Аннеçĕм кўртмерĕ киле...
Çапла ман
Сўнђĕ хăватăм
Тăм тивнĕ çеçкелле...

---

Паçук! Паçук!
Аташнă мĕскĕн,
Пуйан ђĕри
Çапла хăлавсăр.
Иртнисене тавăрма çук,
Çапах та ес
Питех ан макăр.

Кама тивмест
Инкек-синкек?
Хĕрсен ђĕри
Ахаљ те кунĕ.
Сан айăпна йулашкинђен
Çуса тасатĕ
Совет саккунĕ.

Апла иккен:
Ултав...
Инкек...
Йун кĕвĕлет
Калаçнă-çемĕн!
Уй-хир çаплах,
Паçăрхин пек
Йĕрет салхуллăн та
Киҫемĕн...

1928 ç., Елĕк сали.

## Ĕç çинҫе.

Шĕкĕр-шекĕр ӳккелерĕ
Çумăр вĕçтерсе...
Мапа тусăм ӳпкелерĕ:
«Мантăн ес»—тесе.

Манма мар хаҫ, шутлама та
Манăп вăхăт çук.
Уй-хирте еп вутланатăп
Тырă вырнă ҫух.

Ирсерен ирех илемлĕн
Шуçăм килеспе
Уй-хиртен вĕт еп илетĕп
Сăвă тивлетне.

Ан çилленҫҫĕ, тур ҫухласшĕ,
Савăн та йурла!
Манпала та ак туслашрĕ
Хурăçă çурла.

Кăҫăрт-кăҫăрт сар ырашĕ
Мана-каскăна,
Усала-ши, йе ырра-ши
ЙăпатаŤ кăна!

Хура куçăм, çут кĕленҫĕм,
Урăх мĕн калас?

Ыраш хумĕ пек çĕкленҫĕ
Манăн кĕмĕл сас.

Ирхине ирех вăрантăм,
Çыртăм çак сăвва.
Уй-хире еп сăвăран та
Ытларах саван.

Ак каçалăхăн хушшийĕ—
Выртăмăр ана.
Пĕтĕм тырă ытлашшийĕ
Пулĕ хыснана.

Ăмăртса вырни ахаҫ-им?
Пĕтĕм колхоспа!
Тыррине леçетпĕр халĕ
Хĕрлĕ опоспа.

Пĕтĕм пурлăхăмăр пирĕн
Тырă-пулăра.
Çĕнĕ пурăнăçăн ирĕ
Хамăр алăра!

Уй-хирте еп вутланатăп
Пĕтĕм ерттелте.
Ҫуна уççăрĕ мана та:
Пурăнăç—кĕлте!

## Хӗвел хӗртет...

Хӗртет, хӗртет хӗрӳ хӗвелӗ,
Ҫавни ҷӗри пек илӗртет...
Ҫӗршыв питне пӗҫертнӗ меллӗн
Уйӑв пуҫланҷӗ уй-хирте.

Хӗвел хӗртет... Савсах пӑхатӗ
Ҷеҷекленес тӗнҷе ҫине.
Пурте хавас, кашнийӗ хатӗр
Манса каймашкӑн хуйхине.

Шӑнкӑртатсах шывсем йухаҫҫӗ,
Ҷупатӗ пурнӑҫ урапи.
Хирте ирхи ҫӗртме тӑваҫҫӗ—
Пуҫланҷӗ кӗтнӗ ҫураки!

Хӗртет, хӗртет хӗрӳ хӗвелӗ,
Йӑвашшӑн, вӑрттӑн шӑл йӗрет.
Ерттел ҫынни ӗҫлет йӗркеллӗн,
Хирте хӗрӳллӗ ӗҫ вӗрет.

Хӗртех хӗвел! Йурла уй-хирӗм,
Ӗҫри хаваслӑхпа кӗрле!
Ҫурхи кунсен ҷеҷеклӗ ирӗ
Кулса кӑтарттӑр сар хӗрле!

## Супотнĕкре.

Кĕрхи тивлетшĕн
Çĕкленҫĕ уй-хир,
Хавассăн сывларĕ
Пĕр тапхăр.
Пайан
Ĕретĕн-еретĕн епир
Супотнĕке тухатпăр.

Пурин те пĕр шухăш,
Пĕр ĕмĕт вĕрет,
Интустри тĕрекĕ—
Вăл ĕмĕт.
Йунпа шăварнă
Таптанҫăк çĕре
Çĕнетрĕ
Октапĕр хĕлхемĕ.

Йухтарнăҫҫĕ ĕлĕк
Имленнĕ тара
Харамăçă-хуттăр хуçишĕн.
Пайан хастарлăн,
Вăй çитнĕ таран
Ĕçлетпĕр
Ĕçхалăх тĕнҫишĕн...

. . . . . . . . . .

Прикатă салапҫĕ
Хĕрӳллĕ ĕçе.

Ĕçлетпĕр машшин пек,
Йĕркеллĕн.
Мăн кўлĕ шывне
Тыха пек ĕçет
Йуртса ĕшеннĕ хĕвелĕ...

Йем-йешĕл тумтирлĕ
Кўрнеклĕ пахҫа—
Прикатăшăн кăмăл уççийĕ.
Пĕр ватă улпутҫĕ
Хуçи ун тахçан,
Пайан—
Колхос хуçи ун.

Кунта колхосăн
Хăйарĕ,
Улми...
(Епир паранкă çумлатпăр).
Суханĕ,
Кăшманĕ йăранĕ тулли...
Вĕсем те
Прикатă ҫунлах-тăр?
Хĕвелĕ кĕçенҫĕ...
Тивлетлĕн кулаť.
Мĕскершĕн кулаť вăл,
Пĕлетри?
Колхос пахҫийĕ
Пире пула
Вĕр çĕпĕ халат çĕлетрĕ.

5/IX-30 ç. Самар

## «Симĕс кӳлĕ» колхосра.

Тӳпе пĕлĕт—такана,
Лăпкă ирĕ.
Хăлаçланнă катанах
Çеçен хирĕ.

Хăлаçланнă, пĕлĕтрен
Уртăнасшăн...
Сар хĕвелĕ тӳпере
Тем аташнă.

Те аташнă, те ахаљ
Ихĕрет вăл?
Йăлтăртатрĕ акă хаљ
Икĕ рет шăл.

Шăлĕсем ун ылттăнран,
Пурçăн çӳçĕ.
Унăн тусĕ—сулхăнра
Ват кĕтӳçĕ...

Ват кĕтӳçĕ шăхлиђне
Шăхăртайрĕ.
Хăйĕн пысăк кĕтӳне
Йыхăрайрĕ...

Сасă кайрĕ инçенех
Йанăравлăн.
Çакă çутă тĕнђене
Ма ырламăн?!

1.

Улăх тăрăх çул туса
Уткăнатпăр.
«Симĕс кӳлĕ» колхоса
Хаҫ тухатпăр.

Пурçăн тутăр сулкалаҫ
Сар ырашĕ...
Алхасни ун усала
Йе ырра-ши?

Акă çитрĕмĕр хире,
Ак колхосĕ...
Колхос пуçлăхĕ пире
Сăмах хушрĕ:

— Килĕрех, тет, хăнасем,
Килĕрех, тет.
Хăйĕн çутă куçĕсем
Тилмĕреççĕ.

— Хуларан-тăр-ха... каллех...
Епĕ хатĕр!
Йурĕ, кайăпăр халех,
Тăрăр, аҫăр!

Шавлă пурнăç хулара
Хĕсĕрлет-тĕр?
Йăлăхтарҫĕ пуҫ ара
Вăл сире те.

Çавăнпа та уй-хире
Тухрăр пулĕ?
Илĕртеҫҫĕ-им сире
«Симĕс кӳлĕ?»

. . . . . . . . .

Сӑмах хуштӑрӗ унтан
Пирӗн Сашкӑ:
— Епӗр килтӗмӗр кунта
Тыр вырмашкӑн.

Халӗ ху та ес сиссен,
Каламастӑп:
Пирӗн, савӑт аҫисен
Ӗмӗт аслӑ!

Йертсе тух-ха ес пире
Пӗр тивлетшӗн
Сарӑ пурҫӑнлӑ хире
Ӗҫлемешкӗн.

— Йурӗ, каййӑпӑр еппин,—
Терӗ пуҫлӑх.—
Ей, хуралӑҫӑ, Йеххим,
Алӑк уҫ-ха!

## 2.

— ...Акӑ трактӑр хаҫ сире
Еп паратӑп.
Тепӗр шнейккӑ хыҫала
Кӑкаратӑп.

Сире кирлӗ трактӑрис?
Ҫим... Халех еп...—
Пирӗн хамӑрӑн пӗрк—
Шпинкалеҫӗ
Мала тухрӗ те йури
Кулса йаҫӗ:

— Епӗ хам, тет, трактӑрпа
Пултаратӑп.

Хəлĕ сирĕн патăрта
Ђуптарам,—тет.

— Питĕ меллĕ, питĕ шеп,
Терĕ пуçлăх,—
Кунпала та килĕшеп,
Йуре, пуçлăр!

«Симĕс кўлĕ» пуссине
Нус, вĕçтерĕр!—
Тесе хулăн сассине
Вăл вĕçлерĕ...

3.

Трактăрисăн кăмăлпе
Ав, куратри?
Сар ырашĕ хăмăлпе
Кăпшăртатрĕ.
Трактăрисĕ çак куна
Пирĕн Куçкă.
Çеçен хирĕм, хапхуна
Есĕ уç-ха!

Куçкă трактăрĕ çине
Сиксе ларђĕ.
Тавăрайрĕ ђавсине—
Авăрланђĕ.

Таçта пусрĕ урипе,
Тем пăрайрĕ.
Вара трактăр йеррипе
Тапранайрĕ...

4.

«Симĕс кўлĕ» хумханаť
Тапхăр-тапхăр.

Ыткăнайрĕ кăна
Хурăç трактăр.

Çеçен хирĕн çивĕтне
Çивĕтлетпĕр.
Çĕнĕ шнейккă хаҫҫипе
Тикĕслетпĕр.

Хăлаçланҫĕç тĕмĕсем
Пусă урлă.
Йурлăр—ĕçлĕр, аҫасем,
Ĕçлĕр—йурлăр!

Аттăр, тăрăр йунашар
Умлă-хыçлăн.
Вырса тăкнă ыраша
Йатма пуçлăр.

Йатса пухăр пĕр çĕре
Ҫалăш урлă.
Ылттăн тырă пĕрҫĕре
Пирĕн пурлăх!

5.

Вăрман урлă тахçанах
Хĕвел анҫĕ.
Тулли уйăх пахҫана
Хураллантĕ.

Кĕрхи каçĕ сулхăна
Парăнаť-тăр.
Халĕ епĕр хулана
Таварнатпăр.

Шухăш пысăк ĕмĕтрен
Уртăнасшăн...

Ҫутă уйăх пĕлĕтре
Тем аташнă.

Те аташнă, те ахаљ
Ихĕрет вăл?
Йăлтăртатрĕ акă хаљ
Икĕ рет шăл...

Самар, VIII—XI—1930 ç.

## Микуç токлаҫĕ.

Токлат тăват Микуç-халапçă,
Сăмаххисем—хĕлхем пекех:
— «Кулаксене тапта та лапҫăт,
Вĕсем ан ашкăнҫҫĕр текех.

Сĕтел тулли тивлет пуйанăн,
Сан пур—йалан пушах карта...
Ăçтан капла хисеп туйанăн?
Çаплах çырас Шупашкартан...

Çитет. Кунҫул тара йухтарнă,
Сахал хыçман авал ĕнсе.
Пайан пĕр пек йыша пуçтарнăр,
Хаљхи тĕнҫе—ĕççынисен.

Кунçул ҫăнах асаплă, йăвăр,
Кунçул йуррийĕ хирĕçле:
— Пурнас тесен текех ан çывăр!—
Тесе пире вăл çивĕҫлет.

Типсе çунат çаранĕ, хирĕ...
Йепле тўсетпĕр-ши кăна?
Кĕрес пулат кашнийĕн пирĕн
Колхос-комунлă ушкăна.

Çĕн пурăнăç теветленейĕ
Еçпе кĕрешĕпĕр пĕрле.

Тинех вара кунçул телейĕ
Кулса кăтартĕ сар хĕрле».

Токлат пĕтет Микуç халапçăн,
Сасси йанрарĕ хресҫенсен
— Ҫăнах,
Ҫăнах,
Ҫăнах калаĭ çав!
Хаҫхи тĕнҫе—ĕçыннисен!

# Октапӗр ҫилӗ.

Асран кайми сыпӑксем.

Кӗрле, хӑрушӑ ҫил,
Кӗрле!
Тӗнҫе пайан
Такамшӑн урнӑ...
Мӗн пур етемлӗх сехӗрлет,
Етем—
Ҫураллӑхра хӗн-хурлӑ.

Лере,
Монколи ҫиккинҫе
Каллех хускалҫӗ
Виҫкӗн ҫилӗ.
Тӑхлан йурларӗ пуҫ ҫинҫе,
Шӑлне хӑйрарӗ
Хӑрушӑ вилӗм...

Пуҫне ҫӗклерӗ кенерал—
Ылханлӑ мулӑҫӑн хуралҫӗ.
Ҫӗкленҫӗ ҫирӗп,
Тимӗр ал —
Йӗҫхалӑх йунӗ
Ак хуралҫӗ...

. . . . . . . . . .

Йунпах
Шӑварҫӗҫӗ ҫӗре.

Тĕнҫе маҫҫи
Кисренҫĕ хыттăн.
Етем
Ҫураллăхра ҫĕрет,
Етем хакне
Йӳнетрĕ ылттăн.

Тĕнҫе пайланҫĕ
Ик пайа.
Итле мана,
«Ылханлă» Харпин!
Текех йунланнă Киттайа
Приттани мулĕ
Сăрхантармĕ.

Хĕн-хур ҫури,
        Хускал,
                Вăран!
Сана ҫĕнет
ЙУПА трипунĕ.
Сана хускатрĕ ыйхăран
        Хăватлă ҫил,
                ОКТĂПĔР КУНĔ.

*
* *

Ҫул ҫине ҫул,
Кирпĕҫ ҫине кирпĕҫ.
Трупасем
Пĕлĕте тĕтĕреҫҫĕ.
АСЛĂ ОКТĂПĔР,
Хĕлхемне ес сирпĕт,
Тăшмансем
Хăраса ҫĕтĕреҫҫĕр.

Пурнăç çĕнелĕ,
Пурнăç вутланĕ,
Ĕпĕр хаҫ
Парăнми ҫул ҫĕреллĕ.
Кивĕ йал çухалĕ,
Кив йăла путланĕ,
Шурăмпуç
Çĕнĕ пурнăçшăн хĕрелнĕ.

Аталанăр, хунăр,
Вăйхала ўстерĕр!
Пуласси —
Пайанхи пурнăçрах-тăр.
Пуласси — КОМУНĂ,
Савăнăçлă эрă,
Пуласси —
Машшинпа хурăç трактăр.

Аслă Октапĕр,
Вутлă Октапĕр,
Тăшмана ес хытă ăшала!
Епĕр тухатпăр,
Пулăпăр хатĕр
Çирĕп тытмашкăн пăшала.

Партти ҫĕнтерҫĕ —
Партти çĕнтерҫĕ.
Партти карапĕ хурçăран.
Çирĕп утатпăр,
Савăнăç тупатпăр
Ирĕклĕ çĕнĕ пурнăçран.

---

Тук-тук!
Тук-тук!
Хытăрах çап, мăлатук!

Шак-шак,
Шак-шак,
Хăвала ес вăхăта!
Çирĕп ут,
Çирĕп ут,
Йĕс таканлă тимĕр ут!
Ех, ĕçле,
Хыт ĕçле,
Пурнăçа ес çивĕҫле!
Кĕрешӳ,
Çапăçӳ,
Ывăнмашкăн вăхăт çук!

Шуапшкар, 1929 ç.

## Хурçă тĕнҫе.

Ку тĕнҫе,
ҫăнахах,
тĕлĕк мар,
Ку тĕнҫе —
Вăрман шавĕ пек шухă.
Сивĕнмесĕр
çунаť
шĕл-кăвар,
Çулăмпа
Хускалаť пирĕн шухăш.
Ей, йулташ!
Çĕнĕ никĕс хума
хăвăртрах
ҫавсуна
есĕ тавăр:
Хурçă никĕс те
Хурçă хăма—
çакăнта
пулĕ ҫаплă
мухтавăр.
Каллех, тен, тыттарĕç
винттовккă,
йалав;
Каллех, тен, хыптарĕç
хускалнă
йала.
Ей, тухăр пĕр харăс,

Пуçтарăнăр — каррр!
Аманнă çăханăн
    пуçне салатар!

---

Асаплă çул...
Çиҫ-сакăр çухрăм...
Кун-çул вĕçне
Хăçан еп тухăп?
Ех, йунăм,
Йун!
Хуралгăн, йухрăн —
Çапах йĕретĕçке
    хăрушă тупă.
Ан ăмсанăр,
Ан хапсăнăр халĕ
    йунăмпа
        çуса илнĕ
            çĕре.
Аслати çиçсе илĕ те,
Çунтарĕ —
    кĕлпеле
        танаштарĕ
            сире!
Илтместĕри есĕр,
Çил майăн
    йанăрарĕ
        хăрушă
            çикнал:
«Ей, килĕр кунта
Нумайăн,
    çурлапа
        мăлатук
            тытнă ал»!

Ех, кăвак сухал,
Мĕнтен тĕлĕнетĕн?
Йе ватă суха
Кунне хĕрхенетĕн?
Ан тив,
суху
ҫухалтăр;
Ан тив,
йĕтрĕ
мăйан;
Ерттел пулса
йусан та,
Хурҫă лаша
туйан!
Ҫук-им пайан та шанђăк
Вăй-хал кĕрен йалта?
Ђиркў пупран пушанђ-тăк —
Ҫакар кĕрен йалав!
Хура вăй
мĕлки
хайаррăн
кулат̆:
Те ташлат̆ пайан вăл,
те йĕрет.
Ҫилхеллĕ пуп,
асамҫă,
кулак,—
Вĕсем пурте кĕтеҫ
«Де-юре»...*
. . . . . . . . . .

* «Де-юре»—саккун тивĕҫĕ. Асамҫăсем-мĕнсем саккун умĕнђе ĕҫҫыннипе тан пуласшăннине калать.

Каллех, тен,
тыттарĕç
винттовккă,
йалав;
Каллех, тен,
хыптарĕç**
хускалнă
йала.
Ей, тухăр пĕр харăс,
Пуçтарăнăр каррр!
Аманнă
çăханăн
пуçне
салатар!

** Хыптарĕç—çунтарĕç.

## Хурçă ир.

Шурăмпуçĕ
Йарăм-йарăмланҫĕ,
Куçне уçрĕ
Хĕрнĕ хурçă ир.
Пайан манăн
Ĕмĕтĕм хускалҫĕ,
Ĕçе тухрăм
Епĕ прикатир.

Алăмсем ман —
Çирĕп тимĕр сулă
Ыталаççĕ
Шавлă станука.
Савăтра еп
Савăнăçлă Улăп,
Савăтри тивлетĕм ман —
Ука.

Ех, кунçулăм!
Калама çук аслă,
Машшинпа тăванлă,
Йĕкĕреш.
Шав-шавла,
Шавла ес хаваслăн,
Хĕрсе çитнĕ хурăçă кĕреш!

Хамшăн урăх
Ӳкĕнмĕп текех еп,

Сăрхăнтармăп
Нӳрĕ куççуљме;
Пролеттарин
Хурăçă ђеђекĕ
Кĕпер хыврĕ
Пурăнăç çулне.

Çывăрмашкăн çук çав
Пĕр самант та,
Пуç хыçма та халĕ
Вăхăт çук.
Ав, куратăр:
Пĕрхĕнђĕ кăранттă
Шăратнă тимĕр —
Сирпĕнђĕ — сар çу...

Шăратнă тимĕр —
Пурăнăç сĕткенĕ.
Савăт —
Унăн çулăмлă ђĕри.
Çавăнпа та манăн,
Ĕçлекенĕн
Вăй-хăватăм
Хурçă пек вĕри.

Имленмесп еп,
Пуçăма усмастăп
Ĕçпе писнĕ
Çирĕп прикатир.
Еп çеç мар кунта
Пĕтĕм массă
Ăмăртса ĕçлет
Çак хурçă ир.

Çĕнтерӳллĕ ĕçĕн
Ĕмĕт аслă,

Машшинпа тăваплӑ,
Йĕкĕреш.
Ех, шавла,
Шавла ес хавассăн,
Пулас трактăр —
Хурăçă кĕреш!

Сана епĕ
Паттăрăн савалăп,
Шăратса йухтарăп
Кӳлĕ пек.
Вара тин
Аманĕ те аваллăх
Йĕрсе йарĕ
Типĕ куççуҙпе.

Акă пăхăр:
Хурăçă компайăн
Шăранса пиçейрĕ
Талăкрах.
Пĕҙҙен мар,
Йышпала,
Нумайăн
Кĕçенсе тухаԏ вăл
Савăтран.

Уй-хирте
Хурçă ăйăр кĕçентĕр,
Парăнтартăр
Шухă вăхăта.
Колхоса пĕрлешнĕ
Ĕçхресҙенĕ
Çăкăрпа хисеплĕ
Савăта.

Хурçă-тимĕр —
Пурăнăç сĕткенĕ,
Савăт —
Унăн çулăмлă ҫĕри.
Çавăнпа та манăн
Ĕçлекенĕн
Вăй-хăватăм
Çулăм пĕк вĕри.

Самар, 1930.

## Ҫураки маршӗ.

(Майакковски майлӑ).

Вунҫиҫҫӗ те ҫирӗм
Ҫулта ҫеҫ епир.
Кунҫулӑмӑр пирӗн—
Хула та уй-хир.

Кунҫулӑмӑр шухӑ,
Ҫунатсӑр вӗҫет.
Утарнӗклӗн тухӑр
Тивлетлӗ ӗҫе!

Айт-тва!
Айт-тва!
Тухӑр харӑсрах!

Йурламӑпӑр йурӑ
Йулхавлӑх ҫинҫен.
Имленмӗҫӗ урӑх
Ерттеллӗ ҫынсем.

Малаллӑхшӑн мар-ши
Вӑранҫӗ ҫӗре.
Утарнӗксен маршӗ
Йанрарӗ ӗҫре.

Айт-тва!
Айт-тва!
Айӑр акана!

Телейлĕх хăй килмĕ,
Çумĕ пĕлĕтрен.
Ĕçлейĕпĕр тимлĕн
Пĕтĕм ĕмĕтрен.

Кĕçенҫĕ тăрактăр,
Кĕрлерĕ кăна.
Хастарлăн тухатпăр
Çурхи акана.

Аӳ-тва!
Аӳ-тва!
Аӳăр акана!

Хусканăр, вăранăр
Вăрăм ыйхăран!
Çĕн ĕмĕр йанравлăн.
Ĕçе йыхăраӳ:

Ту-ту-у-уг!
Ту-ту-у-ут!
Хăвăрт у-у-ут!

Хускатрĕ ку сасă
Ҫĕмсĕр салана.
Пуçтарăнҫĕ касă—
Тухрĕ акана.

Вăтамĕ, патракĕ
Пĕр ҫăмăр пулса
Пĕрлештрĕçĕ акă
Çирĕп колхоса.

Аӳ-тва!
Аӳ-тва!
Аӳăр колхоса!

Кулакĕ хăйрарĕ
Асавлă шăлне;
Минтевлĕн пуçларĕ
Хăйĕн йуррине:

Хрр-хам,
Хррр-хам!
Ҫăмлам!

Ҫăмламашкăн памăпăр
Еçхалăх çарне—
Пăкăласа лартăпăр
Кулак çăварне.

Утарнĕксен çарĕ
Кăтартĕ вăйне—
Тăшмана хăварĕ
Касă айне.

Малаллăхшăн мар-ши
Çĕкленҫĕ ҫĕре?
Утарнĕксен маршĕ
Йанрарĕ ĕçре!

Аўт-тва!
Аўт-тва!
Аўтăр малалла

1931 ç.

## Пилĕкçуллăх тиферампĕ.

Rot front!

Мĕлйун пролеттари,
Йулашки
Аттаккăна
Çĕкленĕр!
Хĕçпăшал
Çирĕпреххĕн
Тытар-и—
Çĕнтерӳ
Пирĕнте
Ђеђеклентĕр.
Пирĕн фронт—
петтилеткă фронђĕ.
Керойсем—
Ĕçхалăхĕ,
Епĕр.
Иксĕлми вăйхăватăмăр
прођ çеç,
Планетта
Тыткăна
Илетпĕр.
Хурçă ђĕрепеле
ĕрет-ĕретĕн
Тăшмана
Таптаса
Утатпăр.

Петтилеткă
        Крекене кĕретĕ—
Йулашки
        Кирпĕҫне
                Хуратпăр.
Кĕрешӳре
        Рекламĕнта кĕтмеççĕ,
Пĕр антрактсăр
        Ыткăн
                Малалла!
Хурçă утсем
        Пуçĕсене çĕклеҫҫĕр—
Пирĕн лосăнк:
        «Тытрăн—тумалла».
Тăшмансем
        Кĕвĕçсе
                Ҫĕтĕрейҫĕр,
Криçĕсра
        Сехĕрлентĕр
                Приттани.
Петтилеткă—
        Пирĕн хурçă крейççĕр,
Партти
        Унăн
                Харсăр
                        Кăпиттанĕ.
Ҫул хӳмеллĕ
        Советсен кранитси.
Пролеттари штапĕ
        Витере-и мĕн?
Пельшевисăм
        Креппăçĕ
                Кранитçке—

Шăлпала çыртсан тă
Витереймĕв!
Текех
Фортăн куçĕпҫен
Пăхмастпăр,
Хӳререн тытаймĕ
Мистер Байтэрс.
Пирĕн хамăрăн
Петтилеткă-паспăрт
«Сталинкрат ăйăрĕсем»
Ҫупайҫҫĕр.
Петтонлантăр
Советсен çĕршывĕ;
Колхос хирĕ
Хурçă сассипе
Хулапа
Пĕр тон илсе
Хаваслăн йурлĕ.
Çак çимфони
«Ĕмĕр саккипе»
Самана
Сăвайĕсем
Урлă
Комунисăм
Ермитташĕ патне
Çул хывĕ.
Хурçăлантăр
Пролеттари
Çĕршывĕ!
Вара тинех
Пĕтĕм планеттипе
Пĕр Аслă респуплĕк
Интернатсионал

Ђĕлхийĕпе
Пуплĕ.
Купалан,
Петтилеткă-креппăç!
Тилкепене
Çирĕп тытаŤ
Партти.
Çĕршыв питне
Утарнĕксем
Ђеђеклетрĕç—
Истори рыссакне
Тăварас марђђĕ.
Истори темпĕ
Вăрахрах пулсассăн
Ăна ленинисăм
Хĕçпăшалпе
Тивер ес.
Револ̧утси
Тĕллевĕсем
Виттĕр
Пире
Комунисăм патне ес
Илсе тух!
Сан сассуна
Пĕтĕм планеттă
Илттĕр!
«Пол̧шевиксем
Çĕнейми
Креппăç
Çук!»

Самар, 30—31/XII—31 ç.

## Утарнӗк йурри.

Ђун уҫҫи савни мар,—
Хавасланђӑк ђӗре!
Ђун уҫҫи
Хӗрӳ ӗҫшӗн ђеђеклӗ!
Ђӗрери шӗл кӑвар
Ирӗкленнӗ ҫӗре
Хӗлхемпе сирпӗтсе
Еревтлӗ.

Ҫитӗнет хурҫӑ ҫар
Кунпа мар,
Сехетпе.
Пирӗн ҫар —
Ӑмӑртуллӑ прикатӑ.
Ишӗлен пурнӑҫа
Ыранхи ӗмӗтпе
Пайаркан-пайарканӑн
Аркатӑр!
Ей, тӑшман,
Хатӗрлен!
Йе татах хирӗҫен?!
Парӑмна тӳлеме
Вӑхӑт санӑн!
Пур рапођђи пӗрле
Тытӑнайрӗҫ ӗҫе —
Ӗмӗрне вӗҫтеретпӗр
Тусанӑн.

Сирĕл, пушă сăмах!
Савăн, хурçă хӳме!
Кунпа мар,
Сехетпе хаљ ӳсетпĕр.
Стройккăри йухăма
Ĕç парпийĕ кӳме
Пайаннхи самантрах
Хатĕр епĕр!

Çитĕнет хурçă çар
Кунпа мар,
Сехетпе;
Пирĕн çар —
Ăмăртуллă прикатă.
Ишĕлен пурнăçа
Ыранхи ĕмĕтпе
Пайаркан-пайарканăн
Аркатăр!

Самар, 1930.

## Колхос хĕрĕсене.

### ÇЫРУ—ТУКТАШРАН.

Каçарăрах!
Ку хушăмра
Ни кутĕпеç,
Ни тиферамп
пулмарĕ.

Анчах
Куллен шухăшăмра
Сире манса кайас
Çын мар еп.

Пĕлетĕп еп:
Вулакана
Çара сăмах
Çырлахтараймĕ.
Парнас çинче
Пула кăна
Парăмсене
Парса татаймăн.

Сисетĕп еп:
Ку йахăнта
Епир пайтах
Кивçен илетпĕр.
«Çулу инçе...
Туйа кăнтар»,

Тесе калассăр çеç
Килет-тĕр.

Туйатăп еп:
Ман йуррăма
Вăййа тухсан
Есир йурламăр.
Истори хывнă çухрăма
Ђеђеклентерĕр хађ
Хусамăр.

Ан тив,
Ан тив!
Ӳпкевĕм çук.
Сăвăсăрах
Пайан еп тутă.
Уй-хир питне
Çĕнетнĕ ђух
Пĕр ĕмĕтпе
Хастарлăн утăр.

Ђиртен сыватрĕ
Çуркунне.
Пайан еп —
Тинĕсĕн карапĕ.
Çек самантра
Поет ђунне
Утарнĕке
Хывса парап еп.

Ан-тив,
Утарнĕк
    уй-хирте
Трактăрпала
Поемă çыртăр.

Йăлтăр хĕвел
Кашни ирпех
Сывлăмпала
Ăна шăвартăр.

Уй-хир тумланĕ
Йешĕл тум
Ташша йарсан
Тырпул кашлаĕ.
Патшалăха—
Мĕлйунлă сум—
Колхос парнелĕ
Тырă лавĕ.

Ҫампа сире
Уй-хир йурри
Поет мыскаринҫен
Кĕрнеклĕ.
Ҫампа еп хам
«Парнас ҫури»
Йатне илес тесе
Тĕрмешмĕп.

Сиксе вĕрен
Вăйхалăма
Утарлă ĕҫшĕн
Ҫăварлăхлам еп.
Кувалта пек
Кăкăрăма
Пулас кунҫулшăн
Халаллам еп.

Каҫарăрах
Ку хушăмра
Сăвă-таврашĕсем

Çырманшăн
Анҫах
Куллен шухăшăмра
Есир
Вăй-хал кӳретĕр
маншăн.

Çампа та
Ман ӳпкевĕм çук,
Сăвăсăрах пайан сп
Тутă.
Çĕршыв питне
Çĕнетнĕ ҫух
Сирĕнпелех
Хавасланăн утăп,

Самар. 32 ç.

# Автăртан.

«Октăпĕр çилĕ» спорнĕке манăн 4 çул хушшинҫе çырнă сăвăсенҫен паллăраххисем кĕреççĕ. Вăл спорнĕке епĕ 1930-мĕш çултах хатĕрлесе çитертĕм, çав çултах пиҫетрен тухасса ĕмĕтленеттĕм. Анҫах та Тĕпистатăн Самарти уйрăмĕн поликрафи происвотстви ҫухăннипе спорнĕк пайанҫҫенех тытăнса тăҫĕ.

Паллах, çак йулашки икĕ çул хушшинҫе пĕтĕм екkономĕкра пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. В.-Атăл крайĕ, тĕпрен илсен, талкăшпех колективланҫĕ. Кулаксем клас пулса тăнине те, тĕпрен илсен, талкăшпе колективланипе пĕтерĭĕмĕр. Çак ĕçсем пурте комуниссен партийĕ тĕрĕс йертсе пынипе, клас тăшманĕсене—кулаксемпе вĕсен сылтăм тата „сулахай" акĕнттурине хирĕç нимĕн ҫарăнмасăр кĕрешсе пынипе кăна пулма пултарнă.

Икĕ çул хушшинҫи хусканусем питех те пысăк. Вăл улшăнусем уйрăм писсатгĕлсемпе поетсен пултаруллăхĕнҫе те палăрса тăраççĕ (çителĕклех мар пулсан та).

Илемлĕ литтераттурăн тĕп сатаҫĕ—вăл пурнăçри кулленхи аслă строиттĕлствă тавра вулакансен сарлака массин соснанине органисатсилесси, партти политгĕкне пурнăça кĕртес ĕçре çивĕҫ хĕçпăшал пулса тăрасси. Çак йенҫен пăхсан манăн спорнĕкĕмре питĕ пысăк кăлтăксем палăраççĕ.

Спорнёкри сăвăсенҫен нумайёшёсем кивелнё ёнтё, вулаканăн кăмăлне орканисатсилес хăватне çухатнă т. ы. те. Апла пулсассăн мён шутпа кёртнёха автăр вăл сăвăсене ку спорнёке?—тесе ыйтёç нумайăшёсем. Çак ыйту вăл маншăн питех те вырăнлă, ăна хирёç епё кёскен те пулин ответлемеллех.

Нимёнрен малтан çакна асăрхаттарасшăн: кашни поетăн йе писсаттёлён творҫҫёствăри ўсёмёсем питех те тумхахлă çулпала хавхаланса пыраççё. Творҫҫёствă меслеҫёсем шыраса тёрлёрен йăпăш çулсемпе çётсе çўремесёр пёр поет та поет пулман, пёр писсаттёл те писсаттёл картине кёреймен. Çакнашкалах манăн пултаруллăхăм та. Паллах, епё çак çулйёре хўтёлеместёп, пултаруллăх çак сукмаксемпе çётсе çўрени йёркеллё теме пултараймастăп. Ман шутăмпа çав йăпăш çулйёрсен тёп тымарё ăçтан тухса тăнине, мёнле сотсиаллă сăлтавсенҫен тухнине пайаркаласа пани кирлё. Апла пулсан поетăн пултаруллăх çулне сăнамалла, тишкёрмелле, тёпҫемелле, криттёклемелле. Кёскен каласан—тёрёс çул çине кăларма пулăшмалла. Çак тёлёшпе кăна епё ҫылай сăвăсене спорнёкрен кăларса çапмасăрах хăвартăм. Йăпăш туна-и епё, тёрёс-и—сăмах вулаканра.

«Йытă хăй хўрине нихăçан та вараламасť» теççё. Епё ун пек каласшăн мар. Ман шухăшăмпа кашни писсаттёл, кашни поет хăйён протуксине никамран малтан хăй тишкёрсе тухма тивёçлё. Унсăрăн ҫăн-ҫăн пролеттариллё литтераттура тума çук, унсăрăн пролеттариллё литтераттура тăвас сатаҫа халттурăллă йăпăх-йапăхсем кăна хупăрлама пултараççё. Пытармастăп—ку кăлтăксем те

манăн спорнĕкĕмре ҫылайах. Ҫи пысăк ҫитменлĕх —спорнĕке кĕнĕ происветенисем пайанхи сотсиализăм строиттĕлствин сăн-сăпатне, претприйаттисемпе колхос уй-хирĕсенҫи ҫăн-ҫăн утарнĕксене кăтартса парайманни, клас кĕрешĕвĕн ыйтăвĕсене тĕплĕн пайаркаласа кăтартайманни. Ҫак ҫитменлĕхсем ҫинҫеп умсăмахра та сахал кăтартса панă.

Поетсемпе писсаттĕлсене пулăшу кирлĕ. Вĕсен ĕҫĕнҫи ҫитменлĕхсене вăхăтра кăтартса памалла. Вулакансем, ҫак спорнĕке вуласа тухнă хыҫҫăн, мана хăйсен шухăшĕсене пĕлтерĕҫ тесе шанатăп. Манăн атрĕс: Самара, Некрасовская, 99, кв. 2.

Ил. Тукташ.

Самар, 12/IV-1932 ҫ.

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

Умсӑмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Йамшӑк (сӑвӑллӑ фељйеттон) . . . . . . . . . . . 13

### I. Кӗрхи тупа.

1. Йурлах, йурлах . . . . . . . . . . . . . . . 21
2. Уйӑх, уйӑх! пит те ҫутӑ . . . . . . . . . . . 22
3. Ҫап-ҫут ҫава ҫурла пек . . . . . . . . . . . . 24
4. Каҫӗ тӗттӗм те хура . . . . . . . . . . . . . 26
5. Ула йытӑ—уйӑхӗ йӗрет . . . . . . . . . . . . 26

### II. Ҫӗртме ҫинђе.

Йарма купӑс, икӗ рет . . . . . . . . . . . . . 29
Ҫӗртме ҫинђе . . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Атӑл . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 35

### III. Уй-хир йӗрет.

Укҫук аппа йуррисем.

1-мӗш йурӑ . . . . . . . . . . . . . . . . . 37
2-мӗш йурӑ . . . . . . . . . . . . . . . . . 38
3-мӗш йурӑ . . . . . . . . . . . . . . . . . 39
4-мӗш йурӑ . . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Ҫпектаккӑљ хыҫҫӑн („Тапхӑр татӑкӗ“ поемӑран) . . . 42
Уй-хир йӗрет (ескис) . . . . . . . . . . . . . 47

## IV. Хěрӳ ěçре.

Ěç çинҫе . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 54
Хěвел хěртет . . . . . . . . . . . . . . . . . . 56
Супотнěкре . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 57
„Симěс кӳлě“ колхосра . . . . . . . . . . . . . 59

## V. Октăпěр çилě.

Микуç токлаҫě. . . . . . . . . . . . . . . . . . 65
Октăпěр çилě (асран кайми сыпăксем) . . . . . . . 67
Хурçă тěнҫе . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 71
Хурçă ир . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 75
Çураки маршě . . . . . . . . . . . . . . . . . 79
Пилěкçуллăх тиферампě . . . . . . . . . . . . . 82
Утарнěк йурри . . . . . . . . . . . . . . . . . 86
Колхос хěрěсене . . . . . . . . . . . . . . . . 88
Автăртан . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 92

Цена 90 коп.

Ил. Тукташ

# ВЕТЕР ОКТЯБРЯ

Стихи и поэмы

Чувашский язык. Обложка худ. Потапова.

ОГИЗ СРЕДНЕВОЛЖСКОЕ КРАЕВОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО

САМАРА—МОСКВА 1932